# Халăх хисепне тивĕçнĕ

**Пĕтĕм Тĕнчери ватă çынсен кунĕ умĕн Вăрманкасра пурăнакан Елизавета Макаровна Тыкина патĕнче пултăм. Çак сăпайлă та ырă кăмăллă, пултаруллă та правур хĕрарăм, 73 çула çитсе пыраканскер, хăй вăхăтĕнче «Самолет» колхозра ĕçленĕ, 39 çул пĕр улшăнмасăр сысна амисене пăхнă çĕрте тăрăшнă. Ĕçченлĕхĕпе, пултарулăхĕпе районта, республикăра палăрса тăнă. Ленин орденĕ илме тивĕç пулнă. Районта паян вĕсем пиллĕкĕн пурăнаççĕ. Савăнăçлă та телейлĕ ачалăх пулнă-и-ха Елизавета Макаровнан? Çук. Пурнăç йӳççине мĕн пĕчĕкрен курса-туйса ӳснĕ.**



**РАЙОН ÇЫННИСЕМ**

Ашшĕ, Макар Захарович Захаров, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине тухса кайнă вăхăтра Лиза виççĕре пулнă. Аппăшĕ Нина – вунпĕрте, Толя пиччĕшĕ улттăра, Мишша шăллĕ – тăвата уйăхра.

Эх, вăрçă! Мĕнле кăна нуша кăтартман-ши вăл? Нумаях та вăхăт иртмен, ашшĕ вăрçăра вилни çинчен хут килнĕ. Амăшĕ, Ульяна Алексеевна, тăвата ачипе тăрса юлнă.

– Колхозра ĕçлемелле, мĕн чухлĕ те пулин тырă илĕпĕр, колхоз выçă хăвармĕ, – вĕрентнĕ амăшĕ.

Вуниккĕри Лиза «Гигант» колхозра пăрусем пăхма пуçланă. Çулĕпе чи çамрăкки пулсан та шанăçа тӳрре кăларнă. Вăр-вар, ĕçе çыпăçуллă, хăвăрт пурнăçланине курса хĕрачаран чылайăшĕ тĕлĕннĕ. 1954 çулта ăна сысна фермине амасем пăхма куçарнă.

Халĕ калама кăна çăмăл, хăйĕн пурнăçĕн 43 çулне, пĕтĕм ачалăхне, çамрăклăхне вăл ял хуçалăхĕн чи йывăр участокĕнче – выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçре – ирттернĕ. Ĕçне кура – хисепĕ. Унăн тăрăшулăхне пурте асăрханă. 1970 çулта ăна В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа кăларнă юбилей медалĕпе, 1971 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, 1973 çулта Ленин орденĕпе наградăланă. Çав çул Лиза тĕп амасенчен 30-шар çура, тĕрĕслекеннисенчен 9-шар çура илнĕ. Çитĕнӳ кирек кама та чĕререн хавхалантарать тата тăрăшуллăрах ĕçлеме шанчăк парать. Халăх хисепĕ чунчĕрене çĕклет.

Елизавета Макаровна «Районти сысна пăхакансенчен чи лайăххи» ята çичĕ хутчен тивĕçнĕ. Тăвата хутчен «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» паллăпа, нумай хутчен ăна РСФСР, Чăваш АССР тата КПСС райкомĕпе райсовет ĕçтăвкомĕн Хисеп грамотисемпе чысланă.

Туристла путевкăпа вăл Болгарине, Ленинграда, Брестпа Мускав хулисене çитсе курнă.

Ырă ят, юлташсем, ял-йыш хисеплени чăннипех хаклă. Çакă мар-и ĕнтĕ телей? Шутлатăн та тĕлĕнетĕн, ăçтан тупăннă-ха Елизавета Макаровнан çавăн чухлĕ вăй-хăват. Ĕçĕ килти хуçалăхра та мăй таран, çав вăхăтрах фермăра ĕлкĕрсе пынă кăна мар, ялан малти вырăнсене йышăннă.

1972 çулта Лиза хăй пекех çурма тăлăх, пĕрле оператортра ĕçлекен Валерий Тыкинпа пĕрлешсе çемье çавăрнă. Мăшăрĕпе пĕр ывăл пăхса çитĕнтерчĕç. Юрăна анчахрах чаплă туй туса авлантарчĕç. Ашшĕпе амăшĕ ывăлне пĕчĕклех ĕçре пиçĕхтернĕ, тĕрĕс воспитани панă. Юра – водитель, механизатор, хурт-хăмăр ăсти, платник-столяр, каменщик-маляр. Тыкинсен хуçалăхĕ çирĕп, пӳртçуртне, мунчи-лаççине пĕтĕмпех хăйсем çĕклесе лартнă. Картиш тулли выльăхчĕрлĕх усраççĕ, хурт-хăмăр тытаççĕ.

**М.КУДРЯШОВА.**

Вăрманкас.

# Кулибин ĕçне тăсакан

## Вăрнар поселокĕнчи Николай Алексеев ял хуçалăх техникине шутласа кăларакансен республикăри конкурсĕнче палăрнă

**Иван Петрович Кулибин (1735–1818) – вырăссен паллă механик-изобретателĕ. Ăна халалласа республикăра иккĕмĕш хут ăстаçă-механиксен конкурсне ирттернĕ. Пĕлтĕр унта Упнерти Алистарь Иванов тата Иртеменкассинчи Александр Фирсов хутшăннăччĕ. Кăçалхи конкурсра вара Вăрнар поселокĕнче пурăнакан Николай Николаевич Алексеев палăрчĕ.**



**ЫРĂ ТĔСЛĔХ**

Николай Николаевич Канаш районĕнчи Ямаш ялĕнче çуралса ӳснĕ, Вăрнар енче тĕпленнĕ. Вăл район чысне «XXI ĕмĕрти Кулибин» конкурсра хӳтĕлеме тӳр килнишĕн савăнать. «Вăрнар районĕ – тăван ен пекех, – тет Николай Николаевич. – Çавăнпа та малалла та хастарлăха чакармăп». Николай Алексеев конкурсра республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен килнĕ ăстаçăсен хăйсен аллипе пухнă техникине курса тĕлĕннине пытармасть. Уйрăмах ăна çĕр улми кăлармалли агрегат кăсăклантарнă. Николай Николаевич конкурс пĕлтерĕшне пысăка хурса хаклать, мероприяти йĕркелекенсене – «Трактор завочĕсем» концерна, Раççейри трактор тăвакансен союзне, Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ тата ял хуçалăх министерствисене – пысăк тав сăмахĕ калать.

Ăстаçă конкурса мини-трактор тăратнă. Пьедесталăн çӳллĕ картлашкисем çине тăрайман пулин те, вăл пухнă техникăна жюри членĕсем лайăх хак панă. Кулибин ĕçне тăсакана диплом, укçан преми парса чысланă. Николай Алексеев «XXI ĕмĕрти Кулибин» конкурса район шайĕнче те ирттерме сĕнет. Пĕлтерĕшлĕ мероприяти килти хушма хуçалăх тытакансен пуçарулăхне ӳстерме пулăшĕ тесе çирĕплетрĕ вăл.

Çын пуласси ачаран паллă теççĕ. Николай шкулта вĕреннĕ чухнех темтепĕр ăсталама юратнă. Унăн чи пĕрремĕш ĕçĕ – кролик апачĕ турттармалли урапа. Ăна вăл 6-мĕш класра чухне ăсталанă. Ӳсерехпе, тăван хуçалăхра тăрăшнă вăхăтра, юр тăрăх çӳремелли техникăна, шăвармалли, çĕр улми кăлармалли агрегатсене шутласа кăларнă. Мини-трактора 1982 çултах пухнă. Çак тапхăрта ăна пилĕк хутчен çĕнетсе улăштарнă. Пĕчĕк калăпăшлă трактор сехетре 20 çухрăм каять, унра 8 лаша вăйĕ. Техникăна Николай Николаевич манăн «юлташ» тет. Мини-тракторпа кил-тĕрĕшĕнчи чылай ĕçе пурнăçлать, кӳршĕсене те пулăшать. Николай Алексеев хурçă учĕпе тăван яла тăтăшах çӳрет, амăшне тĕрлĕ ĕç туса парать.

Николай Алексеевăн ĕç стажĕ пысăк. Вăл Канаш, Пăрачкав районĕсенчи предприятисенче тимленĕ, хамăр районти «Сельхозтехника», «Агроснаб» организацисенче вăй хунă. Хальхи вăхăтра «Вурнарская» МСО» акционерсен хупă обществинче тăрăшать.

**Е.ТИКИНЕВА.**

# Яш-кĕрĕмĕн кăмăлĕ çĕкленӳллĕ

**Ял хуçалăх техникине шутласа кăларакансен республикăри курав-конкурсне Калининăри вăтам шкулти 8–11-мĕш классенче вĕренекенсем те çитсе курнă. Вĕсем, техника енĕпе професси суйласа илме ĕмĕтленекенсем, ăстаçă механиксен ĕçĕпе кăсăкланса паллашнă.**

8-мĕш «б» класри Женя Ананьев: «Эпĕ пĕчĕкренпех аттепе тата асаттепе пĕрле мотоблокпа тĕрлĕ ĕçе пурнăçлатăп. Курав-конкурсра пулнă хыççăн хам тĕллĕн ял хуçалăх техникине пухма тĕв турăм»,– тенĕ. Миша Михайловăн та кăмăлĕ çĕкленӳллĕ. «Пирĕн усă куракан çĕр лаптăкĕ питĕ пысăк. Конкурса килсе курнăшăн питĕ хĕпĕртерĕм. Кил-тĕрĕшĕнче кирлĕ агрегатсене алăпах ăсталама май пуррине куртăм. Тепĕр çул пирĕн çемье те «XXI ĕмĕрти Кулибин» конкурса хутшăнасса шанатăп», – тенĕ вăл.

**Е.ТОЛСТОВА.**



## *Саламлатпăр!*



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, тăвана – **Кивçурт Енĕш ялĕнче пурăнакан Валерий Павлович ГРИГОРЬЕВА** – 65 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Вăл нумай çул «Звезда» колхозра столярта, художник-оформительте ĕçленĕ, хисепе тивĕçнĕ. Йывăçран тĕрлĕ япаласем ăсталама çеç мар, сăвă-калав çырма та маçтăр. Хăй вăхăтĕнче вăл район, республика хаçачĕсен обществăлла корреспонденчĕ те пулнă.

**Эпир ăна таса сывлăх, вăрăм кун-çул, çирĕп ăс-тăн сунатпăр.**

**Çулсем иртеççĕ сисĕнми,**
**Кирлех-ши уншăн кулянма?**
**Вăй-халĕ пултăр иксĕлми,**
**100 çул сунатпăр пурăнма.**

**Мăшăрĕ, ачисем, кинĕсем, мăнукĕсем, йышлă тăванĕ.**



Савнă мăшăр, юратнă атте – **Хирпуçĕнче пурăнакан Александр Иванович АЛЕКСАНДРОВ** – çак кунсенче хăйĕн 45 çулхи юбилейне паллă тăвать. Эпир ăна пĕтĕм чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе çак паллă кун ячĕпе саламлатпăр, пурнăçра ыррине кăна сунатпăр. Ĕмĕт-тĕллевсем çитсех пыччăр, кил ăшшине, çемье телейне упрама юман пек çирĕп сывлăх, çăлкуç пек тапса тăракан çĕнĕ вăй-хал, ĕçре çитĕнӳсем сунатпăр.

**Ырлăх-сывлăх, ăнăçу**
**Текех пыччăр хушăнса.**
**Умра вырттăр такăр çул**
**Вĕçленмесĕр тăсăлса.**

**Мăшăрĕ, хĕрĕсем, ашшĕ-амăшĕ, тăванĕсем.**

Хаклă çыннăмăра – **Пăваялĕнче пурăнакан Любовь Николаевна РОМАНОВĂНА** – 50 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Хиселлĕ тăванăм, санăн кунçулу вăрăм, сывлăху çирĕп, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ тăванусенчен ан таталтăр. Утас çулу яланах такăр пултăр, мĕн ĕмĕтленни яланах пурнăçлантăр.

**Юбилей ак çитрĕ сан,**
**Иртет ĕмĕр, мĕн тăван.**
**Пурнăçра çапах та сан**
**Пултăр савăнăç ялан.**

**Çывăх тăванĕсем.**

Çĕр çинчи чи хаклă, чи çывăх çыннăмăра, пире кун çути парнеленĕ, ăс-тăн, ачашлăх парса ӳстернĕ аннене – **Рункă ялĕнче пурăнакан Валентина Матвеевна ФЕОФАНОВĂНА** – 70 çулхи юбилейĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, пурнăçу телейлĕ пултăр.

**Таврăнми çулсем кайса пыраççĕ,**
**Ĕмĕт те пурнăçланмасть хăш чух.**
**Ырă туйăмсем чуна лăпкаççĕ –**
**Анннерен хакли никам та çук.**
**Ан кулян пуçу шур тĕс илнишĕн,**
**Ан чирле, пĕл упрама хăвна.**
**Пирĕнтен ăш сăмаха эс йышăн:**
**Тавтапуç, аннеçĕмĕр, сана.**

**Мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем.**

